25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
НОЯБРЬ
29
ВЫРСАРНИКУН
278 (6213) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

Заводсене тимĕр-тăмăр нумайрах пухса парар!

Отечественнăй вăрçă сахал мар металл ыйтать. Танксем, самолетсем, тупăсем, снарядсем, пульăсем—вĕсем пурте металл. Кучухнехи пĕр хĕçпăшала та металсăр тума çук. Çавăнпа та металл пирĕн çĕршыва кашни кун тата питĕ нумай кирлĕ.

Фронтпа халăх хуçалăхĕ металл нумайăн ыйтнине тивĕçтерес тесе, пирĕн металлурги промышленноçĕнчи рабочисем ырми-канми ĕçлеççĕ, социализмлă ăмăртура хурçă, прокат, чугун кунсерен ытларах шăратса кăлараççĕ. Сталин юлташ лартнă задачăна— гитлерла çарпа унăн руководителĕсене пĕтерсе тăкас задачăна—пурнăçа кĕртес пулсан, мĕнпур вăя пухни, мĕнпур ресурссене мобилизацилени кирлĕ.

Çавăн пек ресурссенчен пĕри вăл—хуçалăхри кирлĕ мар тимĕр-тăмăр пулать. Ура айĕнче сапаланса тата тутăхса выртакан тимĕр-тăмăр кашни заводрах, кашни колхозрах пур. Ăна пухса домнăсемпе мартенсенче шăратса кăларсан, питĕ лайăх хурçă пулать. Ахальрен мар ĕнтĕ тимĕр-тăмăра—стратегиллĕ чĕртавар вырăнне, ăна пухассине—оборонăллă ĕç вырăнне хурса хаклаççĕ.

Хуçалăх работникĕсем, парти, профсоюз тата комсомол организацисем çак ĕç çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхнă çĕрте тимĕр-тăмăра пĕр чарăнмасăр пухаççĕ, плана уйăхсерен тултарса пыраççĕ. Республикăри апат-çимĕç предприятийĕсем, Улатăрти махорка совхозĕ, Красноармейски, Кувакински тата Çĕмĕрле районĕсем тăваттăмĕш кварталта тимĕр-тăмăр пухмалли задание октябрь уйăхĕнчех тултарнă. Шупашкарпа Канаш хулисенчи пысăкрах предприятисем те производство планĕсене ирттерсе тултарассишĕн кĕрешнĕ вăхăтрах тимĕр-тăмăр пухса пыраççĕ.

Анчах республикăри чылай организацисемпе предприятисем çак ĕçе тивĕçлипе хакламаççĕ-ха. Республикăра тимĕр-тăмăр пухмалли план çавна пула уйăхран уйăха тулса пымасть. Тăваттăмĕш кварталти плана октябрь уйăхĕнче 3,3 процент кăна тултарнă. Юлашки уйăхсенче те вăл ĕç питĕ çителĕксĕр пулса пырать.

Уйрăмах ку тĕлĕшпе куллен ĕçлеме тивĕçлĕ организацисем — Союзутилĕн республикăри базисем, Чăвашпотребсоюз, промысла кооперацийĕ начар ĕçлеççĕ. Тăваттăмĕш кварталта республикăри потребкооперации системи 300 тонна, промкоопераци 130 тонна тимĕр-тăмăр пухса пама тивĕçлĕ. Анчах вĕсем октябрь уйăхĕнче 13—19-шар тонна кăна пухнă. Союзутилĕн республикăри базисем те çав уйăхра 89 тонна çеç пухса панă. Апла пулин те Шупашкарти межрайбазăн управляющийĕ Хлебнов юлташ нимĕн тумасăр тата ответлăха туймасăр ларать. Совет работникĕсем çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçĕсене вăрçă вăхăтĕнче çавăн пек ÿрĕк-сÿрĕк пурнăçлани пулмалла мар!

Тимĕр-тăмăр пухасси республикăри халăх комиссариачĕсем тăрăх та начар пырать. Вырăнти промышленноçпа суту-илÿ халăх комиссариачĕсен, вырăнти топливо промышленноçĕпе çулйĕр управленийĕсен предприятийĕсемпе учрежденийĕсем тăваттăмĕш кварталта пĕр килограмм та пухса паман. Çак ĕç çине вăрман промышленноçĕпе коммуналлă хуçалăх наркомачĕсен предприятийĕсем, промысла союзĕсен артелĕсемпе мастерскойĕсем те çителĕксĕр çавăрăнса пăхаççĕ. Металлурги заводĕсене тимĕр-тăмăр тăратас ĕçе çавăн пек хакламаннине пĕтерес пулать.

Хуçалăхри ертсе пыракан работникĕсен, партипе совет организацисен çакна ăнланса илмелле: тимĕр-тăмăр пухас ĕç, государствăн ытти заданийĕсем пекех, кирлĕ те пысăк ĕç. Ахальрен мар ĕнтĕ кашни края, облаçа тата автономлă республикăна тимĕр-тăмăр пухмалли çирĕп план параççĕ. Вăл плана оборонăллă задани вырăнне хурса, вăхăтра пурнăçлас пулать. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ 1942 çулти мартăн 6-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, тимĕр-тăмăр пухас ĕçшĕн хула совечĕсемпе район совечĕсен исполком председателĕсем, парти горкомĕсемпе райкомĕсен секретарĕсем ответлă пулса тăраççĕ. Тимĕр-тăмăр пухмалли план районсемпе предприятисем тăрăх пурнăçа мĕнле кĕрсе пынине вĕсем тăтăшах тĕрĕслесе тăма тивĕçлĕ. Районсенчи йышлă артельсем, вĕсен склачĕсем, машинно-тракторнăй станцисем, мастерскойсем таврашĕнче, колхозсемпе совхозсенче хуçалăхра усă курман тимĕр таткисем сахал мар сапаланса выртаççĕ. Союзутиль базисен, промысла союзĕсен тата потребкооперации работникĕсен çав тимĕр-тăмăрсене пĕрмаях пуçтарса тăрассишĕн кĕрешмелле.

Тимĕр-тăмăр пухасси—çур ĕç, ăна тата йышăнакан пунктсене кайса парас пулать. Пухнă тимĕре чугунçул станцисем, складсем патне турттарса тухнă чух вырăнти туртăм вăйĕсемпе усă курмалла. Чугунçул работникĕсен ăна тиеме вагонсем вăхăтра парса тăмалла. Пухнă тимĕр-тăмăра заводсене ăсатмасăр тытса тăни пулмалла мар.

Хура тата тĕслĕ металсене пухса парас ĕçре комсомолпа пионер организацисем пуçарулăх кăтартса ĕçлеме тивĕçлĕ. Пĕр вăхăтра вĕсем ку тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерчĕç. Канмалли кунсенче воскресниксене туса, çĕршер тонна тимĕр-тăмăр пухрĕç. Анчах юлашки вăхăтра вĕсем те çак ĕç çинчен манса кайрĕç. Комсомолецсемпе пионерсен тимĕр-тăмăр пухас ĕçе активлăн тытăнмалла, унта рабочисене, служащисене тата колхозниксене те май пур таран хутшăнтармалла, заводсене металлом пухса пани çĕршыва мĕн тери пысăк усă кÿни çинчен ĕççыннисене ăнлантарса памалла.

Металл—çĕршывпа фронта куллен кирлĕ япала. Хуçалăхра кирлĕ мар тимĕр-тăмăра пухассине куллен туса пырар. Тăван Хĕрлĕ Çара хĕçпăшалсем нумайрах туса пама пулăшар!

Ноябрьти плана тултарнă цехсем

Сталин юлташăн доклачĕпе приказĕ çине ответлесе, Н-ски заводри Кинзбургский юлташ ертсе пыракан цех коллективĕ ноябрь уйăхĕнчи производство планне срокчен тултарма обязательство илнĕччĕ. Коллектив çак обязательствăна чыслăн пурнăçларĕ: уйăхри плана срокчен 4 кун малтан тултарчĕ. Халĕ коллектив планран ирттерсе продукци туса парать.

Кинзбургский юлташăн цехĕ—заводри малта пыракан цех. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту пуçланнăранпах вăл плана кашни уйăхрах ирттерсе тултарать. Çавна пула цех коллективĕ заводăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тăваттăмĕш уйăх ĕнтĕ хăйĕн аллинче тытса тăрать.

Цехри рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем çак уйăхра уйрăмах тухăçлăн ĕçлерĕç. Сталин юлташăн доклачĕпе приказне ăнлантарса панă хыççăн цехри рабочисем пурте, икĕ çамрăксăр пусне, нормăна тултарма пуçларĕç, нумайĕшĕсем ăна 1,5—2 хут ирттерсе тултараççĕ. Уйрăмах стахановецсемпе опытлă рабочисен ĕç тухăçлăхĕ пысăк. Кашни кун 200 процентран кая мар—çакăн пек Люминарская, Данилова, Григорьева тата Хренова стахановкăсен ĕç тухăçлăхĕ. Детальсене хатĕрлекен Чиркова, пĕтĕçтерекен Сачкина работницăсем те ноябрьте нормăран икĕ хута яхăн тухăçлăрах ĕçлерĕç.

Пирĕн войскăсем Сталинград патĕнче ăнăçлăн наступлени туса пыни çинчен Совет Информаци Бюровĕ пĕлтернисене цехри рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем савăнăçпа кĕтсе илеççĕ. Хĕрлĕ воинсен фронтри çĕнтерĕвĕсем çине ответлесе, вĕсем 1942 çулăн юлашки уйăхĕнчи ĕç планне те срокчен тултарма пулчĕç.

* * *

КУСЛАВККА, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Комбинатри малта пыракан цехсем уйăхран уйăха çĕнĕ çитĕнÿсем туса ĕçлеççĕ. Пушкин, Пименов, Дружинин тата Калашников юлташсем ертсе пыракан цехсем октябрьти производство планне ăнăçлăн тултарчĕç, вĕсем ноябрьти ĕçсен планне те срокран темиçешер кун малтан пурнăçа кĕртрĕç. Сталин юлташăн доклачĕпе тата Хĕрлĕ Çарăн Сталинград патĕнчи çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланнă рабочисемпе работницăсем ноябрьте пысăк тухăçлăхпа ĕçлерĕç. Пименов цехĕнчи стахановецсем Колесников, Подольский тата Климашевский юлташсем уйăхри нормăна 280 процент тултарчĕç. Пушкин цехĕнчи Береговой, Петров тата Харинский стахановецсен ноябрьти ĕç тухăçлăхĕ вара нормăпа пăхнинчен тăватă хута яхăн пысăкрах. Дружинин цехĕнчи Вареспа Михельсонс столярсем те нормăран виçĕ хута яхăн тухăçлăрах ĕçлерĕç.

Н. ПЕТРУЧЕНКО.

Çунасем тумалли задание пурнăçларăмăр

ВĂРМАР, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Тăваттăмĕш кварталта çунасем тумалли задание леспромхоз коллективĕ срокчен пурнăçларĕ. Çак ĕçре Ловский, Егоров тимĕрçĕсем, Купчихин, Шивалов, Христофоров плотниксем тăрăшса ĕçлерĕç. Вĕсем хăйсен куллен хи нормисене ытлашшипех тултарса пычĕç. Тимĕрçĕсене пулăшакан Сидорчев, Бурцев тата Смирнов çамрăксем те пултарулăх кăтартрĕç.

В. КУПЦОВ,
Леспромхоз директорĕн заместителĕ.

Юлашки сехетре

Противника çĕнĕрен пырса çапни

Пирĕн войскăсем Центральнăй фронтра наступлени пуçласа янă

Çак кунсенче пирĕн войскăсем ВЕЛИКИЕ ЛУКИ хулинчен хĕвелтухăçнерехри районра тата РЖЕВ хулинчен хĕвеланăçнерехри районра наступлени тума тытăннă. Противник вăйлăн хирĕç тăнине сирсе пырса, пирĕн войскăсем противникăн вăйлăн çирĕплетнĕ оборона линине татса кĕрсе кайнă. ВЕЛИКИЕ ЛУКИ хулин районĕнче нимĕçсен фронтне 30 километр хушши татса тухнă, РЖЕВ хулинчен хĕвеланăçнерехри районра противникăн фронтне виçĕ вырăнта татса тухнă: пĕрремĕш участокра 20 километр хушши, тепĕр участокра 17 километр хушши тата виççĕмĕш участокра 10 километра яхăн татса тухнă. Асăннă енсенче пуринче те пирĕн войскăсем 12 километртан пуçласа 30 километр таран шалалла кĕрсе кайнă. Пирĕн войскăсем ВЕЛИКИЕ ЛУКИ—НЕВЕЛЬ, ВЕЛИКИЕ ЛУКИ—НОВОСОКОЛЬНИКИ чугунçулĕсене, çавăн пекех тата РЖЕВ—ВЯЗЬМА чугунçулне татса касна.

Пирĕн войскăсем малалла кусса пырассине чарса лартма хăтланса, противник нумай та хаяр контратакăсем тăвать. Противникăн контратакисене пирĕн войскăсем ăна пысăк çухатусем кÿрсе ăнăçлăн сирсе пыраççĕ.

Наступлени тунă вăхăтра пирĕн войскăсем халăх пурăнакан 300 пункта ытла ирĕке кăларнă тата нимĕçсен 4 пехотнăй дивизине, пĕр танковăй дивизине аркатса тăкнă.

Виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче 400 çынна çити тыткăна илнĕ, 138 оруди, 110 миномет, 593 пулемет, 3.592 винтовка, боеприпассемпе продовольствин тата ытти япаласен склачĕсене тытса илнĕ.

106 оруди, 180 миномет, 300 пулемет тата 50 танк пĕтерсе тăкнă.

Çапăçу хирĕнче противникăн 10 пине çити салтакĕпе офицерĕ вилсе юлнă.

Çапăçусенче генерал-майор ТАРАСОВ, генерал-майор ГАЛИЦКИЙ, генерал-майор ЗЫГИН, генерал-майор ПОВЕТКИН, полковник ВИНОГРАДОВ, полковник РЕПИН, майор ЗУБАРЕВ, полковник МАСЛОВ, полковник МИХАЙЛОВ, полковник КНЯЗЬКОВ, полковник БУСАРОВ, полковник АНДРЮШЕНКО войскисем уйрăмăнах палăрнă.

Пирĕн войскăсем малалла наступлени туса пыраççĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 27-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Ноябрĕн 27-мĕшĕнче Сталинград патĕнче пирĕн войскăсем малалла кусса пынă тата Верхне-Чиловский, Мариновка, Новоаксайский, Заря ятлă халăх пурăнакан пунктсене йышăнса илнĕ.

* * *

Ноябрĕн 26-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 20 танкне тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă, 3 поездне ÿпĕнтерсе янă, артиллерин 10 батарейине пусарса лартнă, противникăн икĕ батальон таран пехотине тата пĕр эскадрон утлă çарне сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград хулин çурçĕр пайĕнче Горохов юлташ ертсе пыракан боецсем активлăн çапăçса 400—500 метр малалла кусна. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 вилли ытла выртса юлнă. Заводсен районĕнче пирĕн чаçсем темиçе çурта тытса илнĕ тата нимĕçсене пысăк çухату кÿнĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем, противник хирĕç тăнине сире-сире ярса, наступлениллĕ операцисем туса пынă. Пĕр участокра Н-ски соединенин боецĕсем малалла куçса пырса нимĕçсенчен 51 танк, 5 оруди, 8 миномет, 1000 винтовкăна яхăн тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен виллисем нумай выртса юлнă. Тепĕр участокра пирĕн боецсем сасартăк пырса çапса халăх пурăнакан пункта тытса илнĕ, çав пунктра противникăн чаçĕсене кирлĕ хатĕрсем парса тăракан база пулнă. Пысăк продовольстви складне, япаласем хунă 4 склада, горючи тултарнă 200 пичкене яхăн тата ытти çар пурлăхĕсем тытса илнĕ. Пирĕн кавалери чаçĕсем гитлеровецсене халăх пурăнакан пĕр пысăк пунктра çавăрса илнĕ, халĕ çав пункта тытса илесшĕн çапăçаççĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем пĕр участокра кăнтăр-хĕвеланăçнелле татса тухма хăтланнă противникăн атакине сирсе янă, ытти участоксенче ăнăçлăн малалла куçса пынă. Н-ски соединени халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ, нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ, 18 пулеметнăй точкăна, артиллерин 6 батарейине пĕтерсе тăкнă, 18 дзотпа блиндажа çĕмĕрнĕ. Нумай çынна тыткăна илнĕ. Пирĕн моторизованнăй чаçсем малалла татса кĕрсе кайнă та противникăн пысăк колоннине аркатса тăкнă. Противникăн 11 танкне, войскăсемпе боеприпассем турттарса пыракан 58 автомашинине тата пĕр орудине пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн темиçе çĕр салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре артиллерирен хирĕç-хирĕç персе тăнă. Н-ски чаçăн участокĕнче пирĕн артиллеристсемпе минометчиксем нимĕçсен 8 дзочĕпе блиндажне ишĕлтернĕ, 2 танкне тата боеприпассем тиенĕ 6 автомашинине персе çĕмĕрнĕ, артиллерин 3 батарейине пусарса лартнă, 250 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн артиллери подразделенийĕ икĕ кун хушшинче боеприпассем тиенĕ 13 автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Противникăн артиллери батарейине тата минометсен икĕ батарейине пусарса лартнă.

Разведка тăвакан отряд противникăн тылĕнче нимĕç гарнизонне тапăннă, 60 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, 3 орудине тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Карели фронтĕнче Н-ски соединенин боецĕсемпе командирĕсем юлашки 4 кун хушшинче белофинсен салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна çити пĕтерсе тăкнă, вĕсенчен 77-шне снайперсем вĕлернĕ. Çак снайперсем хăйсене уйрăмах палăртнă: Куликов, Питаев, Климовский, Смолин тата Бесаров.

* * *

Минск облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ ноябрь уйăхĕн малтанхи 10 кунĕнче 17 поезда ÿпĕнтерсе янă, çав поездсенчен иккĕшĕ противникăн чĕрĕ вăйне турттарса пынă. 7 паровоз тата 51 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Унсăр пуçне, совет патриочĕсем оккупантсемпе кĕрешсе нимĕçсен 160 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, 50 салтакĕпе офицерне амантнă.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Орел облаçĕнчи Семеновка ялĕнче тискер ĕç туни çинчен хыпар илнĕ. Çав ялтан икĕ хĕре Германие ямашкăн ирĕксĕрлесе кÿршĕри хулана илсе кайнă. Çул çинчен çав хĕрсем хăйсен ялне тарса таврăннă. Темиçе кун иртсен гитлерла çынçиенсем Семеновка ялĕнчи пĕтĕм халăха площаде пухнă та çав тарса таврăннă хĕрсене персе пăрахнă.

Ноябрĕн 28-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Ноябрĕн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем Сталинград патĕнче малтанхи еннеллех наступлени туса пынă.

* * *

Сталинград хулин çурçĕр пайĕнче пирĕн подразделенисем çĕрлехи çапăçура нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă тата темиçе çурта противникран тасатнă. 8 пулемет, 2 миномет, 3 противотанковăй пăшал тата радиостанци тытса илнĕ. Хулан заводсем вырнаçнă пайĕнче пирĕн боецсем противникăн 20 дзочĕпе блиндажне çити йышăнса илнĕ тата 100 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем, противник хирĕç тăнине сире-сире ярса, малалла куçса пынă. Н-ски часть нимĕçсен танксем хушса парса вăйлатнă батальонне аркатса тăкнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 300 вилли ытла выртса юлнă. Нимĕçсен 7 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Пирĕн боецсем 6 оруди, 17 пулемет, 9 миномет, 8 автомашина тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Тепĕр участокра совет танкисчĕсем противникăн оборони ăшне шала кĕрсе кайса нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне çити, 21 орудине, противотанковăй оборонин 2 батарейине, 25 пулеметне тата 30 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем ăнăçлăн наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Пĕр участокра противник, совет чаçĕсене малалла куçма чарас тесе, контратака тунă. Виçĕ сехет хушши пынă çапăçура пирĕн боецсем противника пысăк çухату тÿстернĕ тата каялла чакакан гитлеровецсем хыççăнах халăх пурăнакан пункта кĕрсе кайнă. Нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Юсавлă 3 танк, 8 оруди, 23 пулемет, 5 миномет, боеприпассен складне тата продовольстви складне тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре совет боецĕсем пĕр пахă высотăна йышăнса илнĕ. Противник, çав çухатнă позицисене тепĕр хут тытса илес тесе, пĕр батальон ытла пехотăпа 6 танк вăйĕпе пирĕн подразделенисене темиçе хут та атакăланă. Гитлеровецсен атакисене сирсе янă. Çав высотăшăн пынă çапăçура противникăн 180 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, 4 пулемет, 2 миномет, темиçе автомашина тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Тепĕр участокра Шаршаков юлташ ертсе пыракан разведчиксем тăшманăн тылĕнче 70 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн артиллеристсем, снайперсем тата разведчиксем виçĕ кун хушшинче тăшманăн 1000 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ, 28 дзочĕпе блиндажне ишĕлтернĕ, 2 противотанковăй туппине тата 7 станковăй пулеметне пĕтерсе тăкнă.

Ленинград патне пымалли вырăнсенче пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 2 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Украинăри партизансен пĕр ушкăнĕ темиçе ăнăçлă операци туса ирттернĕ. Совет патриочĕсем 2 чугунçул станцине аркатса тăкнă, пĕр паровоза, 2 водокачкăна тата груз тиенĕ 35 вагона сирпĕнтерсе янă. Унсăр пуçне, партизансем 9 автомашинăна тата 6 трактора пĕтерсе тăкнă, япаласен складне, горючи складне тата противникăн тĕрлĕ çар пурлăхĕсем хунă 3 пакгауза çунтарса янă. Партизансемпе çапăçса, гитлеровецсен 300 салтакĕпе офицерĕ ытла вилнĕ. Совет патриочĕсем 11 пулемет, 148 винтовка, темиçе пин патрон тата ытти трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем вăхăтлăха тытса илнĕ совет районĕсенчи халăха вĕлерсе пĕтереççĕ. Витебск облаçĕнчи Брудяна ялĕнче гестаповецсен отрячĕ хресченсене ачисемпе пĕрлех выльăх картине хăваласа пухнă та вĕсем çине гранатăсем вăркăнтарнă. Çав облаçри Заречье ялĕнче гитлеровецсем мĕнпур çуртсене çунтарса янă, çыннисене Германие каторгăлла ĕçе хăваласа кайнă.

* * *

Радом районĕнче (Польшăра) поляк патриочĕсем нимĕçсен çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Крушени вăхăтĕнче 200 гитлеровец ытла вилнĕ е аманнă.

Рабочисене çĕрулми сутаççĕ

КАЛИНИНО, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Ермошкăри Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем, Иккасси ялсоветĕнчи «Майăн 1-мĕшĕ» колхозăн колхозникĕсем чĕннине ырласа, Шупашкарти пĕр заводăн рабочийĕсене 200 пăт çĕрулми сутрĕç. Рабочисене государство хакĕпе сутма хăйсен тупăшĕнчен колхозник К. Афанасьев 65 килограмм, Г. Павловпа Е. Махоркин колхозниксем 50-шар килограмм çĕрулми уйăрса пачĕç. Кашни колхозникĕн хуçалăхĕ рабочисене сутма пĕрер-икшер пăтран кая мар çĕрулми, пахча-çимĕçсем уйăрса пачĕç. Пухнă çĕрулмипе пахча-çимĕçсене çак кунсенчех завода хĕрлĕ обозпа леççе параççĕ.

С. ШАДИН.

Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕ çине ĕçпе ответлеççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсене хирĕç вăйлă наступлени пуçласа яни çинчен пĕлтерекен хыпара илсенех «12 лет Октября» колхозра колхозниксен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пирĕн тăван Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсене вăйлăн аркатса малалла куçса пынăшăн колхозниксем савăнаççĕ. Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвне кашни колхозник чĕререн савăнса итлерĕ, Хĕрлĕ Çарăн боецĕсен геройла çапăçăвĕ çине ĕçпе ответлемешкĕн тата лайăхрах ĕçлеме пулчĕ.

Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвне итленĕ хыççăн колхозниксем авăна кунĕн-çĕрĕн çапма тытăнчĕç. Вĕсем декабрĕн 1-мĕшĕччен пур йышши тырăсене те пĕтĕмĕшпех çапса пуçтарма тăрăшаççĕ. Колхоз государствăна тырă леçсе пама транспорт бригади организациленĕ, бригада кашни кунах хатĕрлев пунктне 20-шер лав тырă леçет. Ку ĕçе те колхоз декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçлет. Колхозниксен ĕçĕнче çĕнĕ çĕкленÿ, ĕçлес хастарлăх вăйланчĕ.

«Родина» колхозăн членĕсем те Хĕрлĕ Çар çĕнтерÿллĕ наступлени туса пыни çине ответлесе, авăн çапас ĕçе вăйлатрĕç. Ултă лаша вăйĕпе ĕçлекен молотилкăпа вĕсем авăна кунĕн-çĕрĕн çапаççĕ, государствăна çак кунсенчех тырă парса татма тăрăшаççĕ.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

КОЛХОЗНИКСЕМ САВĂНСА ĔÇЛЕÇÇĔ

КУКЕÇ, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çарăн Сталинград фронтĕнчи чаçĕсем тăшмана хирĕç вăйлă наступлени туса пынă хыпар районри колхозсене çиçĕм пек саланчĕ. Вăл кашни колхозникпе колхозницăн чĕрине савăнăç кÿчĕ, фронта вăйлăн пулăшассишĕн татах та хастарлăрах ĕçлеме хавхалантарчĕ.

Районри колхозсем иртнĕ вунпилĕк кун хушшинче 1.343 гектар çинчи тырпула çапса пуçтарчĕç. Çак вăхăтра пурĕ 32 колхоз авăн çапса пĕтерчĕç, 59 колхоз государствăна тырă парса татрĕç.

Çак кунсенче колхозниксем тата пысăкрах тимлĕхпе ĕçleme пуçларĕç. Ял-хуçалăх ĕçĕсене вĕçленĕ колхозсем хăйсен сывăхĕнчи колхозсене авăн çапма, тырă турттарма пулăшаççĕ.

«Кормилец» колхозра, лаша вăйĕ сахалрах пулнипе, государствăна тырă парас ĕç каярах юлнă. Пулăшу «11 лет Октября» колхозран пынă. Колхоз хăйĕн кÿршине пулăшма транспорт бригадине янă. Çав бригада ик-виçĕ кун хушшинче хатĕрлев пунктне 6 тонна тырă леçнĕ. «Кормилец» колхоз та хăйĕн лашисене йăлтах тырă турттарас ĕçе кÿлнĕ, вăл мĕнле пулсан та декабрĕн 1-мĕшĕччен государствăна тырă парса татасшăн.

Апаш ялсоветĕнчи «Трудовик» колхоза социализмлă пулăшу пама районра малта пыракан «Молния» колхоз членĕсем пынă. Вĕсем колхоза хатĕрлев пунктне 16 лавпа тырă турттарса парса пулăшаççĕ.

Иккассинчи «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз—пысăк колхоз. Государствăна тырă парса татнă пулсан та, колхозăн авăн çапмалли нумай юлнă. Колхоз хăйĕн пĕтĕм вăйне пухса ĕçлет пулсан та, авăна декабрĕн 1-мĕшĕччен çапса пĕтересси курăнман. Çакна кÿршĕри колхозсем курнă та пулăшу сĕннĕ. «Красное знамя» колхозран 25 колхозник авăн çапма пынă. Ыттисем хăйсен молотилкисене панă.

Т. ЛОГИНОВ.

19 трактор юсанă

Ш.-ХАСАН. МТС-ăн механически мастерскойĕнче хĕрÿ ĕç пырать. Бригадăсем тракторсене юсаççĕ. 1943 çулхи çуракине лайăх хатĕрленсе тухассишĕн ремонт тăвакан рабочисем ăмăртса ĕçлеççĕ. Бригадăсем социализмлă ăмăртăва тухса конкретнăй обязательствăсем илнĕ. Филиппов юлташăн 13-мĕш номерлĕ бригади паянхи куна виçĕ трактор, 2-мĕш, 3-мĕш, 10-мĕш, 11-мĕш номерлĕ бригадăсем иккĕшер трактор юсанă.

Ноябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне МТС пурĕ 19 трактор юсанă.

В. ЯКОВЛЕВ.

Кашни вĕллерен 30-шар килограмм пыл илнĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.) «Жнейка» колхоз вĕлле хурчĕсене çулран-çул йышлăлантарса пырать. Вĕлле хурчĕн утарĕнче халь 47 çемье. Кашни вĕллерен кăçал 30 килограмм ытла пыл пуçтарса илнĕ. Государство хакĕпе шутласан та, кăçал колхоз пыл сутса 8 пин тенкĕ тупăш илет, колхозниксене те ĕçкунĕсем тăрăх валеççе панă. С. Якимов колхозникĕн çемьи 14,4 килограмм, С. Кирилловăн семьи 16,2 килограмм, А. Иванов колхозникĕн çемьи 15,8 килограмм пыл илнĕ.

Выльăх-чěрлěх ěрчетес ěçе малалла вăйлатса пырассишěн

Общественлă выльăх-чěрлěх ěрчетес ěç çине партипе правительство яланах пысăк пěлтерěш параççě. Халě, отечественнăй аслă вăрçă вăхăтěнче, хамăрăн территорин пěр пайне вăхăтлăха çухатнине пула выльăхсен хисепě хăшпěр чакнă пирки, çак ěçшěн уйрăмах тăрăшас пулать, мěншěн тесен çěршыва Хěрлě Çар халě выльăх-чěрлěх продукчěсем нумай ытларах кирлě.

Выльăх-чěрлěх ěрчетмелли государственнăй плана республика кăçалхи вунă уйăх хушшинче иртерсе тултарни Чăваш республикинчи колхозниксем выльăх ěрчетес тěлěшпе тӳрě кăмăлпа тата вăя шеллемесěр ěçленине уççăн кăтартса парать. Выльăх ěрчетмелли çулталăк планне Чăваш республикинчи колхозсем кăçалхи ноябрěн 20-мěшě тěлне мăйракаллă шултăра выльăхсем енěпе 101,8 процент, сыснасем енěпе 118 процент тата сурăхсем енěпе 101,4 процент тултарнă. 1942 çулти январěн 1-мěшě тěлне пулнипе танлаштарсан, кăçалхи ноябрěн 20-мěшě тěлне мăйракаллă шултăра выльăхсен хисепě 144 процента çитн, сыснасен хисепě 146,8 процента çитн, качакасемпе сурăхсен хисепě 178,2 процента çити ӳснě.

Уйрăм районсем выльăх-чěрлěх ěрчетес тěлěшпе тата пысăкрах çитěнӳ турěç. Сăмахран, Шăхасан районěнче, 1942 çулти январěн 1-мěшě тěлне пулнипе танлаштарсан, ноябрěн 20-мěшě тěлне мăйракаллă шултăра выльăхсен хисепě 60 процент чухлě тата сурăхсен хисепě 93 процент чухлě ӳснě, Елчěк районěнче мăйракаллă шултăра выльăхсен хисепě 56 процент чухлě тата сурăхсен хисепě 105 процент чухлě ӳснě.

Çамрăк выльăхсене сыхласа хăварас тата выльăхсен хисепне ӳстерес ěçре республикăри уйрăм колхозсем питех те паха çитěнӳсем турěç. Çакна нумай примерсемпе çирěплетсе пама пулать. Сăмахран, Ишлей районěнчи «Большевик» колхоз выльăх-чěрлěх ěрчетес плана пур выльăхсем енěпе те иртерсе тултарнă тата çамрăк выльăхсене пурне те сыхласа хăварнă. Каганович ячěпе тăракан колхозри сурăхсен ферминчи бригадир Василиса Алексеева 30 сурăхран 40 путек илсе пурне те сыхласа хăварнă. Чкаловски районри «Красное знамя» колхозри свинарка Екатерина Куракова хăйне çирěплетсе панă 8 сыснаран 137 çурă илсе пурне те сыхласа хăварнă, плана 65 процент чухлě иртерсе тултарнă. Çěрпӳ районěнчи «Молодая сила» колхозри свинарь Михайлов, фермăра 6 çул ěçлекенскер, 1942 çулта пěр сысна пуçне 18 çурă ӳстернě, планран иртерсе 60 çурă пăхса çитěнтернě.

Отечественнăй вăрçăн условийěсенче колхозниксем геройла ěçленине кăтартакан нумай йышлă примерсем Чăваш республикинче выльăх-чěрлěх ěрчетес ěç малашне те вăрçă вăхăтěнчи хăвартлăхсемпе ӳссе пырассине шанса тăма май параççě. Анчах та, выльăх-чěрлěх ěрчетес ěçре пысăк çитěнӳсем тунă пулин те, уйрăм колхозсен тата çěрěç пайěсен ěçěнче пысăк çитменлěхсем пур-ха, вěсене хăвăрт пěтерсе, выльăх-чěрлěх ěрчетес ěçе малашне татах вăйлатса пымалла.

Çамрăк выльăхсем чылайěшě вилсе пěтни уйрăм колхозсен, çěрěç органěсен тата партипе совет организацийěсен ěçěнчи пысăк çитменлěх пулса тăрать. 1942 çулта республикăра пăрусем 16,9 процент чухлě, сысна çурисем — 13,1 процент чухлě, путексем — 13,8 процент чухлě тата тихасем — 12,9 процент чухлě вилсе пěтнě. Çамрăк выльăхсем çак районсенче уйрăмах нумай вилнě: Кувакино районěнче тихасем 27,7 процент чухлě, путексем — 36,3 процент чухлě вилнě, Елчěк районěнче тихасем 25,8 процент, пăрусем — 17,3 процент чухлě вилнě, Комсомольски районра тихасем 24,2 процент, пăрусем — 25,5 процент чухлě вилнě. Çамрăк выльăхсем вилсе пěтни, пуринчен малтан, ферма работникěсем хăйсен ěçне юлхавлăн туса пынинчен, колхоз председателěсем çак пысăк ěçшěн тăрăшманнинчен килнě. Фермăри работниксем асăрхаманнине пула, çамрăк выльăхсем çуралнă-çуралманах вилсе кайнисем час-часах пулаççě. Уйрăм колхозсенче çамрăк выльăхсене сивě, тасамар витесенче усраççě, çакăн пирки вара вěсем вилеççě. Сăмахран, Кувакино районěнче 1942 çулти суркунне тěлне пăрусен 78 проценчě шăнса чирленě пулнă.

Çамрăк выльăхсем уйрăм колхозсенче тата районсенче чылай вилнě пулин те, партипе совет организацийěсен руководителěсем, районсенчи çěрěç пайěсен работникěсемпе специалисчěсем хăйсене валли тивěçлě выводсем туман, пěлтěр пулнă çитменлěхсене кăçал пěтерес енне тивěçлипе тăрăшман, выльăхсене хěл каçарма хатěрленес тěлěшпе çителěксěр ěçленě. Çав çитменлěхсем уйрăм колхозсенче халě те пур-ха, вěсене районсенчи комиссисем тěрěслесе тухнă чухне палăртнă. Чылай колхозсенче вăл çитменлěхсене пěтернě, анчах, тӳрех калас пулать, пěтěмěшпех мар-ха.

Чăваш АССР Совнаркомěпе ВКП(б) Обкомěн бюровě йышăннă тăрăх, выльăх-чěрлěхсене хěл каçарма хатěрленес ěç мěнле пынине тěрěслеме районсенче тунă комиссисен ěçре палăртнă çитменлěхсене çийěнчех пěтерме тăрăшмалла пулнă. Анчах та уйрăм районсенче (Советски, Октябрьски, Кувакино, Шăмăршă) çав комиссисем колхозсен выльăхěсене хěл каçарма мěнле хатěрленнине çиелтен кăна тěрěсленě, хăйсем палăртнă çитменлěхсене çийěнчех пěтерессишěн тăрăшман, çав районсенчи партипе совет органěсен руководителěсем комиссисене хăйсем палăртнă çитменлěхсене çийěнчех пěтерме çирěп кăтартусем паман.

Пирěн çамрăк выльăхсене валли лайăх условисем туса вěсене пěтěмěшпех сыхласа хăвармалла. Çавăнпа та выльăх-чěрлěх витисене ăшăтас тěлěшпе халех практикăллă мерăсем йышăнмалла, кăçал çуралакан мěнпур çамрăк выльăхсене пěтěмěшпех сыхласа хăварма тата плана иртерсе тултарма условисем туса хумалла. Колхоз председателěсен, районсенчи çěрěç пайěнчи работниксемпе специалистсен, партипе совет органěсен руководителěсен выльăх-чěрлěх ěрчетес ěç мěнле пынине яланах лайăх пěлсе тăмалла, кашни фермăра, кашни колхозра ěç мěнле пынине пěлмелле, пулăшу кирлě чухне выльăх-чěрлěх фермисен работникěсене пулăшма пěлмелле.

Выльăх ěрчетес ěçри пысăк ыйту — выльăх апачě хатěрлесси пулса тăрать. Кăçал выльăх апачне кăçал валли кăна мар, килес çул валли те хатěрлесе хăварма пур майсем те пулчěç. Малта пыракан колхозсен председателěсем тěрěс турěç, вěсем фермăсем валли шултăра апат та, концентратсем те çителěклех хатěрлерěç, утăпа улăма фермăсем патне илсе пырса, акт çырса вěсене ферма заведующийěсене пачěç.

Выльăх апачěсене перекетлěн тыткаланин тěслěхне Шупашкар районěнчи «Осоавиахим» колхоз кăтартса парать. Ку колхозра улăмăн пысăк пайне тураççě, ăна лайăх сыхласа усраççě, выльăх апачěсене расходламалли нормăсемпе плансене çирěплетнě. Выльăх-чěрлěх фермисен работникěсем выльăхсене тăрантармалли тата пăхса усрамалли правилăсене пěлеççě, улăмпа утта фермăра икě виçě уйăхлăх хатěрлесе хунă. Çакăн пек примерсем нумай илсе кăтартма пулать, анчах пур колхозсенче те ěçе çавăн пек йěркелесе яманнха.

Уйрăм колхозсен председателěсем выльăх апачě хатěрлес ыйтăва хакламаççě, вăл ыйтупа хăйсем ěçлемеççě. Октябрьски районри Шěнерпуç колхозěнче (колхоз председателě Грекова юлташ) ферма работникěсем выльăх апатне итем çинчен ферма патне пěр кунлăха кăна илсе пыраççě. Ку колхозра выльăх апачěн запасне туман. Апата ним шута илмесěр тăкаклаççě, уншăн никам та ответ тытмасть, çавăнпа та кунта выльăх апатне салатса пěтерес тата выльăхсене апатсăр тăратса хăварас хăрушлăх пур. Çакăн пек йěркесěрлěхсене Октябрьски райçěрěç отделěн заведующийě Портнов юлташ курать, анчах вăл çитменлěхсене пěтерес тěлěшпе нимěнле мерăсем те йышăнмасть.

Колхозсенчи общественлă выльăх-чěрлěхе хěл каçарма апат-çимěç тата çуртйěрсем хатěрлес тěлěшпе ВКП(б) Обкомěпе Совнарком кăтартса панине хăшпěр районсем (Çěрпӳ, Комсомольски, Октябрьски, Советски) начар пурнăçа кěртсе пыраççě. Çак районсенчи руководительсем общественлă выльăх-чěрлěх валли çителěклě апат хатěрлес тата çуртйěр тăвас тěлěшпе татăклă мерăсем йышăнмаççě.

1942 çулти ноябрěн 10-мěшě тěлне Комсомольски районри колхозсенче шултăра апатсем 52 процент чухлě, сěтеклě апатсем 76 процент чухлě кăна шута илсе приходласа хунă; Çěрпӳ районěнчи колхозсенче шултăра апатсем 65 процент чухлě, сěтеклě апатсем 66,4 процент чухлě шута илнě. Кашни уйăхра выльăх апачě мěн чухлě тăкакламаллине палăртса план тăвас ěçе Çěрпӳ районěнчи колхозсенче тытăнман-ха. Комсомольски районра вара 51 колхозран 21 колхозěнче кăна çавăн пек плансене туса хатěрленě.

Выльăх апачěсене фермăсем патне турттарса пырса акт тăрăх парас ěç Çěрпӳ районěнче хуллен пулса пырать, унта 17 колхозра кăна выльăх апатне акт тăрăх панă. Çӳлте асăннă районсенчи чылай колхозсенче авăн çапнă хыççăн улăма капана хывмаççě, итем тавра сапаласа пăрахаççě, арпа таврашěсемпе те начар усă кураççě. Нумай колхозсенче утă капанěсене карта тытса çавăрман, çавăнпа выльăхсем пырса çисе пěтереççě. Районсемпе колхозсен руководителěсем тăтăшах тěрěслесе тăман пирки хăшпěр çěрте выльăх апатне салатса пěтернисем те пулнă. Çěрпӳ районěнчи «Красный флот» колхозра выльăхсене апата нормăсăр, ура айне пăрахса параççě, çавăнпа утăпа улăм тухăççăр тăккаланса пěтсе тислěке каяççě. Комсомольски районри Буденный ячěпе тăракан тата «Правда» колхозсенче сыснасене çěрулми çумасăр параççě, тěштырăсене авăртмасăр çитереççě. Çакăн пек çитменлěхсене пирěн халех пěтерес пулать.

Выльăх апачěсене пухса хатěрлени, вěсене тěрěс тата перекетлěн расходлани выльăх-чěрлěх ěрчетес ěçре татăклă вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа та колхоз председателěсен, çěрěç отделěсен, çавăн пекех тата партипе советăн вырăнсенчи органěсен çав ěç çине уйрăмах тимлěн çаврăнса пăхас пулать. Выльăх апачěсене фермăсем патне турттарас ěçе халех вěçлес пулать, выльăхсене хěлле тата суркунне çитерме запас туса хурас пулать, выльăх апатне расходлас ěçе тивěçлипе йěркелесе ярас пулать.

Выльăх-чěрлěх ěрчетес ěçре мěнпур выльăхсем валли лайăх тă ăшă çуртйěрсем туса парасси пысăк ыйту пулса тăрать. Пěтěмěшпе илсен, выльăх-чěрлěхсене çуртйěрсем хатěрлесе парасси республикăра начар мар тăрать: лашасем валли çуртйěрсем 99 процент чухлě, мăйракаллă шултăра выльăхсем валли — 107,2 процент, сыснасем валли — 103,5 процент, сурăхсем валли — 85 процент, кайăк-кěшěксем валли 83 процент чухлě хатěр. Çак цифрăсенчен Чăваш республикинчи колхозсенче выльăх-чěрлěх витисем çителěклех пур пек курăнать, анчах та ěçе тимлěрех пăхсан, хăшпěр районсенчи уйрăм колхозсенче выльăх-чěрлěхсене тěплě çуртйěрсем туса парсах çитерейменха. Выльăхсем хăшпěр çěрте колхозниксен килěсенче, час-часах япăх çуртсенче тăраççě. Уйрăмах çакă вăл Ишлей, Канаш тата ытти районсенче палăрать.

Ишлей районěнче мăйракаллă шултăра выльăхсене 109 пуç, сыснасене 228 пуç, сурăхсене 348 пуç; Канаш районěнче—мăйракаллă шултăра выльăх-чěрлěхсене 411 пуç, сурăхсене—541 пуç колхозниксен килěсем тăрăх валеççе тăратнă. Выльăх-чěрлěхсене лайăх çуртйěрсем туса парас ěç çине тимлěн çаврăнса пăхмалла. Выльăхсем хупмалли çуртйěрсене чи кěске срокра юсаса ăшăтмалла. Выльăх çуртйěрěсене юсаса ăшăтас ěçе уйрăм колхозсенче питě вăрахăн туса пыраççě, уйрăмах çакă вăл Комсомольски, Çěрпӳ, Октябрьски, Кувакино тата ытти районсенче палăрать. Çавăн пекех выльăх-чěрлěх çуртйěрěсене юсас ěç Элěк, Красноармейски районсенче те çителěксěр пулса пырать. Элěк районěнче ноябрěн 10-мěшě тěлне ěне витисене 50 процент, лаша витисене 40 процент, сысна витисене 38 процент юсанă; выльăх витисене ремонтлас ěç Красноармейски районра та çакăнтан малах кайман.

Выльăх-чěрлěх ěрчетес ěçе ăнăçлă туса пырасси кадрсенчен нумай килет. Выльăх-чěрлěх ěрчетес ěçре паха тěслěхсем кăтартакан çынсем пирěн сахал мар. Ишлей районěнчи «Родина» колхозри выльăх-чěрлěх фермин бригадирě Анастасия Фадеева кашни фуражлă ěнерен планпа пăхнă 1000 литр вырăнне 1.173 литр сěт суса илнě, кашни сурăхран планпа пăхнă 2 килограмм вырăнне 2.5 килограмм çăм илнě, планпа пăхнă 22 путек вырăнне 32 путек тěрěс пăхса çитěнтернě. Выльăх-чěрлěх ěрчетмелли плана пур йышши выльăхсем енěпе те иртерсе тултарнă. Районри выставка комитечě Фадеева юлташа пěрремěш степеньлě дипломпа тата укçапа наградăланă.

Çакнашкал тěслěхсене нумай палăртма пулать. Вěсем пурте ěçěн ăнăçлăхне кадрсем татса панине кăтартаççě.

Пачах урăхла, нумай тěрлě примерсем илсе, фермăсенчи çитменлěхсем вěсенче ěçлекен çынсем час-часах улшăнса тăнинчен килнине кăтартса пама пулать. Выльăх-чěрлěх фермисенчи кадрсем час-часах улшăнса тăнине пирěн пěтермелле, кадрсене яланлăхах ěçе çирěплетмелле, вěсем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарса ямалла, агрозоотехникăна вěренессине ятарласа семинарсем, калаçусем, докладсемпе лекцисем туса, çынсене зоотехника кружокěсене явăçтарса организацилемелле.

Партипе совет органěсен руководителěсем выльăх-чěрлěх фермисенче ěçлекен работниксене хăйсем лайăх пěлме тивěçлě, вěсене кирлě вăхăтра ěçлě пулăшу пама тивěçлě. Анчах та пирěн хăшпěр ертсе пыракан юлташсем çакна пур çěрте те ма-ха пурнăça кěртсе пыраççě, çакă вара ěç япăхасси патне илсе çитерет.

СССР Наркомземěпе СССР Наркомземěн Политуправленийě йышăннă тăрăх выльăх-чěрлěх ěрчетес ěçре паха тěслěхсем кăтартнăшăн Чăваш республикине Оборонăн Государственный Комитечěн куçса çӳрекен Хěрлě ялавне илме кандидата тăратнă.

Çак хавасла хыпар выльăх-чěрлěх фермисенче ěçлекен пирěн колхозниксемпе колхозницăсене социализмлă выльăх-чěрлěх ěрчетес ěçе малалла вăйлантарса пырассишěн татах та ытларах вăйпа курса ěçлеме хавхалантарать.

Çулталăк вěçленичченхи юлнă вăхăтпа усă курса, пирěн çак ěçри çитěнӳсене çирěплетмелле, уйрăм фермăсенче палăрнă çитменлěхсене пěтермелле, выльăх-чěрлěх ěрчетес ěçе малалла хăвартлăн аталантарса пыма пур условисене те туса памалла, çапла вара Оборонăн Государственный Комитечěн куçса çӳрекен Хěрлě ялавне илсе, ăна республика аллинчен вěçертмелле мар.

Хěрлě Çар отечественнăй вăрçă фрончěсенче тăвакан çитěнӳсем, уйрăмах пирěн войскăсем Сталинград патěнче ăнăçлăн малалла куçса пыни мěнпур совет халăхěн ěçри хастарлăхěпе патриотизмне фронта татах та ытларах пулăшмашкăн çěклет.

Орденлă Чăваш республикинчи ěççынисем хăйсен вырăнěсенче вăя хěрхенмесěр ěçлесе, тăшмана хăвăртрах тапса аркатма Хěрлě Çара пулăшěç.

А. МАТВЕЕВ,
Чăваш АССР Совнаркомěн председателě.

Ют çěршывсенче

Хěрлě Çар Сталинград районěнче наступлени туни çинчен ютçěршывсенче мěн çыраççě

США

«ГИТЛЕР РОССИЙĂРИ 1942 ÇУЛХИ КАМПАНИРЕ ПОРАЖЕНИ ТӲСРЕ»

НЬЮ-ЙОРК, ноябрěн 26-мěшě. (ТАСС). Хěрлě Çарăн ăнăçăвěсем çинчен Америкăри хаçатсем хěпěртесе, мухтаса çыраççě.

Юнайтед пресс агентстви статья пичетлесе кăларнă. Çав статьяра çапла каланă: халě вăрçă урăхла май улшăнса каймалли самант çитрě. «Гитлер Российăри 1942 çулхи кампанире поражени тӳсрě», тенě.

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат çапла çырать: вырăссем контрнаступленийě туни хальхи вăхăтра вăрçăри чи паха факт пулса тăрать; вырăссем Сталинград районěнче малалла куçса пыраççě, çакă вăл Германин кăнтăрти мěнпур позицийěсем умěнче тăракан хăрушлăха сехетсеренех ӳстерсе пырать. Кам пěлет, Германи войскисене питě вăйлăн аркатса тăкěç. Анчах вěсем аркатса тăкасран хăтăлма пултарассăн та, Российăн кăнтăр-хěвелтухăçěнче Германин позицийěсем хытă хавшаççě. Нимěçсем Хěрлě Çарăн хăватне çапса хуçма, Атăла тата нефте тытса илме пултараймарěç. Çав вăхăтрах Тунис патне пымалли вырăнсенче хаяр çапăçусем пыраççě. Тунис вăл Вăтаçěр тинěсěн çăраççийě пек пулса тăрать. Союзниксем Вăтаçěр тинěсре пуç пулса тăма пуçлани Кăнтăр Европа çине наступлени тума май парать. Гитлер Туниса хăйěн аллинче тытса хăварас тесе хăрушă утăмсем туни—вăл çак тěлěшпе хăраса тăнине кăтартать. Кам пěлет, вăл хăрушă утăмсем питех те нумай турě пуль. Вырăссем Российăн кăнтăрěнче Гитлерăн çарне çапса аркатма, пěтерсе тăкма пултарсассăн, çакăн хыççăн, кам пěлет, тěнěл держависене аркатса тăкасси килсе çитě.

Турция

НИМĚÇСЕМ ЙĂНАШРĚÇ

СТАМБУЛ, ноябрěн 26-мěшě. (ТАСС). Хěрлě Çар Сталинград районěнче малалла куçса пыни çинчен йышлăн пěлтернисене тата ун çинчен ют çěршывсенче мěн çырнине Турци хаçачěсем шултăра заголовоксемпе пичетлеççě, çавăн пекех тата Совет Союзěпе Германи хушшинчи фронтăн тěрлě участокěсенче вăрçă ěçěсем мěнле пынине кăтартакан ӳкерчěксене пичетлеççě.

«Ени сабах» хаçат хăйěн умстатьинче çапла çырать: «Паянтан вара ěнтě нимěнле сăмахпа та çак чăнлăхан факта пытарса тăма пулмасть: нимěçсем Россия тěлěшпе каллех йăнăшрěç», тет.

«Ватан» хаçат çакна палăртса парать: вырăссем стратеги тěлěшпе ăнăçусем турěç, Германи çарне питех те йывăр условисене кěртсе ӳкерчěç. Нимěçсем çирěп те хăрушă Сталинграда тытса илес тесе нумайччен тăрăшни, ăна тытса илес тесе пысăк сухатусем тӳсни ахалех пулчě. Халě нимěçсен каялла чакма тивет». Çав статья авторě çапла шутлать: Хěрлě Çар Сталинград районěнче малашне те малалла куçса пырсан, нимěçсем калама çук пысăк поражени тӳсме пултараççě»,—тет.

Çурçěр Африкăри вăрçă ěçěсем

ЛОНДОН, ноябрěн 27-мěшě. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пěлтерет: Тунисăн çурçěр пайěнче Германин 20 пин салтака яхăн пур пуль тесе шутлаççě.

Хаçатсем пěлтернě тăрăх, юлашки темиçе кун хушшинче Бизертăпа Тунис патне пымалли вырăнсемшěн çапăçу пырать. Çав вырăнсем иккěшě те союзниксен аллинче. Противник татса тухас тесе тăрăшни курăнмасть, анчах та вăл меллě позицисем йышăннă, вăл унтан пěрремěш çарăн çурçěр енчи флангне хěвелтухăçнелле куçма кансěрлеме пултарать. Юлнă танксене нимěçсем çěре чавса лартнă, вěсемпе Англин артиллери позицийěсем çине перес ěçре усă кураççě. Англи орудийěсем противникăн çав танкěсен виçě пайěнчен икě пайне пěтерсе тăкнă ěнтě.

Союзниксен авиацийě ноябрěн 26-мěшě ыран тенě чух çěрле Тунисри доксем çине питě нумай бомба пăрахнă. Бомбăсем тěл лекнипе нефтехранилищěсем, чугунçул çурчěсем тата тавар склачěсем çунса кайнă.

ЛОНДОН, ноябрěн 27-мěшě. (ТАСС). Официальнăй йěркепе пěлтернě тăрăх, пěрремěш арми, противник вăйлăн хирěç тăнине сирсе ярса, противника Межез-Эль-Баб ятлă опорнăй пунктран, Тунисран 30—40 мильăра ларакансккертен, хăваласа кăларнă.

Авиаци танксене хытă пулăшса пырать. Самолетсен пысăк соединенийěсем тăшманăн аэродромěсене тăтăшах тапанаççě.

Рейтер агентстви пěлтернě тăрăх, сывлăшра пуçпулса тăрассишěн пыракан çапăçусем Тунисра питě вăйланса кайнă.

Гитлер Франци флотне тытса илме хăтланни нимěнсěрех пěтсе ларнă

ФРАНЦИ МОРЯКĚСЕМ ТУЛОН ПОРТĚНЧИ КАРАПСЕНЕ ПУТАРНĂ

СТОКГОЛЬМ, ноябрěн 27-мěшě. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви официальнăй йěркепе çапла пěлтерет: ноябрěн 27-мěшěнче ирхине 4 сехетре Германи войскисем Тулона пырса кěнě. Нимěç танкěсем арсенал патнелле кайсан, француз адмиралě де Лаборд карапсен экипажěсене хăйсен карапěсене путарма приказ панă, çав приказа вара çийěнчех пурнăçа кěртнě. Ирхине 10 сехет тěлне шыв çинче Францин пěр карапě те юлман.

Гитлер Лавальпе ятарласа тунă килěшӳре Тулона оккупацилеместěп, ăна «уйрăм зона» туса хуратăп, тесе сăмах панă пулнă. Халě ěнтě гитлеровецсем çав трюка акă çакăн пирки туни паллă пулса тăнă: вěсем Францин кăнтăр çыранне оккупациленě хыççăнах Франци флотне тытса илме пултарайман, çавăнпа та вěсем Лавальпе пěрле француз морякěсен сыхăлăхне йăпатса пусарса лартасшăн пулнă, çапла туса çав флота тытса илме хатěрленме вăхăт тупасшăн пулнă.

Кунта килнě хыпарсем тăрăх, гитлеровецсем çав килěшӳве пăсса Тулона кěтмен çěртен пырса кěни Тулонри халăха, çавăн пекех тата Тулонри гарнизонăн войскисемпе карапсен экипажěсене питех те çилентернě, тарăхтарнă.

Берлинра официальнăй йěркепе каларнă пěлтерӳ Германи войскисем Тулона кěнě чухне вěсене халăх, войскăсем тата морякcем хирěç тăни çинчен каланă.

ТУЛОНРИ ĚÇСЕМ ÇИНЧЕН ТЕПЛĚНТЕРЕХ КАЛАНИ

ЛОНДОН, ноябрěн 27-мěшě. (ТАСС). Рейтер агентстви Тулонри ěçсем çинчен Вишири радио тěплěнтерех пěлтернине сарать. Вишири радион пěлтерěвěнче çапла каланă: ирхине Германи бомбардировщикěсем Тулон çине ушкăнăн-ушкăнăн вěççе пынă, вěсем францусен çар карапěсене çутатас тесе ракетăсем пăрахнă. Ытти бомбардировщиксем порта кěмелли вырăнсене магнитлă минăсем пăрахнă тата порт таврашěнчи укрепленисем çине фугаслă бомбăсем пăрахнă. Зенитнăй орудисем Германи самолечěсем çине пеме тытăннă. Хăшпěр карапсем портран тухса кайма хăтланнă. Анчах та çав вăхăтра хěвеланăç енчен нимěçсен бронетанксăй колоннисем пыни курăнса кайнă, вěсем тěп гавань патне пынă та ăна йышăнса илнě. Тинěс префектурин, почтăн тата муниципалитетăн çурчěсем те часах нимěçсен аллине кěнě. Нимěçсен танкěсемпе броневикěсен тепěр колонни арсенала Кастильо хапхи енчен пырса кěнě. Унтан вěсем «Страсбург» линкор тăракан Милон докěсем патнелле кайнă. Германин моторизованнăй колоннисем «Дюнкерк» ятлă питě пысăк линкор тăнă Вобан докěсем патне автоматчиксене янă. Çав доксем умěнче 4 йывăр крейсер тата çăмăл крейсерсемпе эсминецсем, корветсем нумай тăнă. Сасартăк питех те вăйлă взрыв пěтěм тавралăха кисрентерсе янă: «Страсбург» линкорăн команди хăйěн карапне путарнă. Унтан ытти карапсем çинче те взрывсем пулнă. Ун хыççăн вара французсен çыран хěррнчи батарейисене сирпěнтерсе янă.

Хăшпěр карапсем çинче вěсене путарма хатěрлекенсе çитеймен пулнă. Çавăнпа та вěсен экипажěсем карапсене пěтерсе тăкиччен нимěçсене çывăха ярас мар тесе нимěçсем çине пеме тытăннă.

Карапсене нимěçсен аллине парас мар тесе хытă тăрăшнă морякcем хушшинче вилнисем нумай. Пур судчăсен командирěсем те хăйсен карапěсем шыва путиччченех капитан вырăнěнче тăнă. Командирсенчен пысăк пайě шыва путнă.

Тул çутăлсан чуна çӳçентерекен картина курăнса кайнă: Франци флочěн пур карапěсем те айккине йăванса кайнă, вěсене çăра тěтěм пěлěчě хупăрласа тăнă. Хула урамěсенче нимěç грузовикěсен гудокěсем кăшкăртни илтěннě. Нимěçсем хăйсене хирěç çирěп тăнă французсене, тыткăна илнěскерсене турттарса кайнă.

Пěтěмпе çутăлса çитсен те взрывсем чарăнман. Ун чухне пысăк мар карапсене сирпěнтере-сирпěнтере янă.

Сайра-хутран аслати пек вăйлă сасă кěрлесе кайнă: французсем боеприпассен склачěсемпе горючи запасěсене сирпěнтере-сирпěнтере янă.

Каярахпа Вишири радиостанци Тулонра çыранри батарейăсене, тинěс арсеналне, боеприпассен склачěсене тата горючи резервуарěсене сирпěнтерсе яни çинчен пěлтернě.

ЛОНДОН, ноябрěн 27-мěшě. (ТАСС). Вишири радиостанци 18 сехетре çапла пěлтернě: Тулонри карапсем тăмалли вырăн çинче çаплах çăра тěтěм мăкăрланса тăрать. Сайра-хутран взрывсем илтěнсе каяççě. Ку вăл шыва путнă çар карапěсен тар усракан нӳхрепěсем сирпěне-сирпěне каяççě.

ГИТЛЕР ПЕТЭНА ЧĚНСЕ КАЛАНИ

ЖЕНЕВА, ноябрěн 27-мěшě. (ТАСС). Германи войскисене Тулона пырса кěме хушакан приказа кăларнипе пěрлех Гитлер Петэна çыру янă. Унта вăл çак агрессиллě çěнě ěçěн сăлтавне çапла ăнлантарса парать: французсен çар чăçěсенче тата флотăн личнăй составěнче Германие хирěçле шухăш-кăмăлсем ӳссе пынă; çавăнпа та эпě Тулона йышăнса илсе унти çар чăçěсене салатса яма тата флота демобилизацилеме шут тытрăм, тенě.

Юлашкинчен Гитлер çапла тăрăхласа калать: нимěçсем кирлě «мероприятисене» пурнăçа кěртнě хыççăн халě ěнтě «Францине Германия пěр-пěринпе чăнласа килěштерсе ěçлеме» кирлě никěс пулса тăчě, тет. Тěрěссипе илсен хальхи Франципе пěтěмпех Берлина пăхăнтармалли никěс пулса тăнă.

---○---

Пěлтерӳ

Ноябрěн 29-мěшěнче, каçхине 5 сехетре, ВКП(б) Горкомěн парткабинетěнче, лекцисем вулакан залра докладчиксемпе агитаторсем тата беседчиксем валли инструкциллě доклад пулать. Доклад теми: «Сергей Миронович Кировăн пурнăçěпе ěçěсем çинчен».

ВКП(б) Горкомěн парткабинечě.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Заводу требуются:

[illegible] и техники, технологи по холодной обработке металла и нормировщики, снабженческие, складские и счетно-конторские работники, машинистки.

Требуются следующие квалифицированные рабочие: токари, револьверщики, строгальщики, фрезеровщики, автоматчики, слесари-инструментальщики, слесаря по ремонту, слесаря по автоделу, подсобные рабочие, уборщицы, штамповщики, прессовщики, лакировщики, волочильщики, долбежники, шлифовщики, электромонтеры, электрослесари, грузчики, дворники, штукатуры, каменщики, печники, плотники, шорники-смазчики, шоферы, слаботочники, радист, прачки, курьеры.

Требуются также вахтеры (охранники) и пожарные работники.

Принимаются переквалификанты (взрослые ученики) по всем указанным выше специальностям.

Обращаться: ул. Карла Маркса, 64, в помещение Бюро пропусков от 11 до 15 час. дня.

Водосвету требуется нормировщик по нормированию слесарно-токарных работ.

Обращаться: г. Чебоксары, Водосвет, отдел кадров.

3—1

Чувашаптекоуправление продолжает сбор и заготовку шиповника сушеного и мороженного. Сбор стимулируется промтоварами. К сведению сборщиков: при хранении мороженного шиповника нельзя допустить оттаивания последнего, которое может привести к порче сырья, поэтому собранный мороженный шиповник нужно сохранять в неотапливаемом помещении.

Граждане! Организуйте сбор мороженного шиповника, тем самым вы поможете обеспечению витамином и быстрейшему выздоровлению раненых бойцов в госпиталях.

Собранный мороженный шиповник сдавайте районным и городским аптекам.

Чувашаптекоуправление.

Сортировочной фабрике „Союзутиль“ требуются для постоянной работы: старший бухгалтер, счетовод-кассир, заведующий хозяйственной частью, сортировщицы, охранники.

Оплата по соглашению.

Обращаться по адресу: Кировский поселок, Гражданская ул., 13, Контора фабрики „Союзутиль“.

Утерянную мастичную печать на имя Янымовской артели «20 лет Чувашии» считать недействительной.

Водосвет производит набор девушек для ускоренного обучения по специальностям машинистов, пом. машинистов, смазчиков и электриков. На время обучения выплачивается зарплата ученика, а по сдаче испытания выплачивается полностью зарплата соответственно полученной квалификации. Имеется столовая.

Обращаться: Водосвет, отдел кадров.

Центральному Дому Крестьянина требуется на постоянную работу бухгалтер. Жилплощадью обеспечивается. За справками обращаться в дирекцию Дома крестьянина.

Дирекция

Наркомлесу Чувашской АССР для работы в аппарате требуются: начальник финотдела, ст. инженер по мехтранспорту, ст. инженер—технолог, ст. экономист-плановик, спец. по технике безопасности, секретари и машинистка.

Для работы в предприятиях требуются: плановики, спец. по лесозаготовкам и лесфонду, гл. бухгалтера, служащие и рабочие всех квалификаций. Отоплением и квартирой обеспечиваются.

РЕДАКЦИ АДРЕСĚ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарěн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайěн 3—99. ялхуçалăх пайěн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11615 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 58 84 п.